**«Çурри – сана, çурри – мана…»**

Çурри – сана, çурри – мана,
Ку вăйă маншăн питĕ паллă...
Пĕр пĕтĕм çеç вутри чуна
Лăплантармалăх вăй-хавалля.

Турам кăна хурса ума
Ыттисене çунтар каç-ирĕн,
Мана хавхалану тупма
Пĕр пĕтĕм тулăх туйăм кирлĕ.

Çурри вăл йăпанма кăна,
Тĕпренчĕк – вĕлтĕр саланмашкăн.
Çурри – лешне, çурри – ăна,
Чăпай* вара никамшăн.

*(* Чăпай – тулли, пĕтĕмми (вак укçа – чăпай укçа))*

*Станьял, В. «Çурри – сана, çурри – мана…» / В. Станьял // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 424-425.*